Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

Пĕрлех ĕçлеççĕ. Ыйтусем те пур

Телейĕн сăлтавĕ тĕрлĕрен пек туйăнать кашни çыннăн. Шухăшлаттаракан ыйтăвĕсем пушшех те пĕр пек мар. Оринин ял тăрăхĕн кунĕ те çакна тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ.

Асăннă ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă пĕртăван Шишокинсем ертсе пыракан "Оринино" тата "Восток" хуçалăхсем – паян ура çинче çирĕп тăракан хуçалăхсенчен пĕрисем. Кунта иртнĕ çул ашпа сĕте те виçĕмçулхинчен палăрмаллах ытларах туса илнĕ. Ку вара хуçалăхра ĕçлекенсен ĕç пурри, уйăхран уйăха ĕç укçине илсе тăни пирки калать. Çакăнтан лайăххи мĕн пултăр ял çыннишĕн. Ĕç укçи тенĕрен, вăл районти вăтам кăтартуран пысăкрах пулин те, пурăнмалли чи пĕчĕк минимума çитеймест-ха. Ялта пурăнакансем, ытти ял çыннисем пекех, пурнăçа килти хушма хуçалăха тытса сыпăнтарса пыраççĕ.

Тепĕр ырă уйрăмлăха палăртса хăвармасăр май çук: килти хушма хуçалăха аталантарма районĕпе пурĕ 833 кредит илнĕ пулсан, Орининсем вара ăна 86-ăн илнĕ. Урăхла каласан, паттшалăх пулăшăвне илекенсен йышĕн 10 процент ытларахăшĕ чухлĕ пулать. Районта 16 ял тăрăхĕ пулнине шута илсен, ку япăх мар. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. С. Суриков ку ĕçре хăй тĕслĕх пулни те ырă витĕм кӳнĕ пулĕ. Вăл 240 пин тенкĕлĕх илнĕ асăннă кредита. Килти хушма хуçалăхсемпе ĕçлени вара ку тăрăхра ял хуçалăх кооперативĕ йĕркелес ыйтăва та çуратать. Ку тăрăхра пурăнакансемшĕнех меллĕ-çке çакă.

-Ку ыйтăва ял тăрăхĕн шайĕнчех кăçал татса паратпăр,- терĕ Александр Сергеевич Пăсăрмантан Лапкассине кайнă çĕрте каçма тăвасси пирки. Бюджет учрежденийĕсенче иртнĕ тĕл пулусенче те вĕсенче ĕçлекенсем кирек хăш ыйтупа та ял тăрăхĕ айккинче юлманни пирки каларĕç.

Тумаллисем вара, чуна канăç паман ыйтусем кашнинех пур. Ку тăрăхра пурăнакансене Мулкачкассине тӳрĕ çул çукки те хытах пăшăрхантарать. Кунтан Оринин шкулне 71 ача вĕренме çӳрет: шкул директорне шкул автобусĕ çукки канăç памасть. Хальлĕхе вĕсене ку йывăрлăхран бюджет тулашĕнчи укçа-тенкĕпе тытса тăракан автобус кăларать. Анчах та унпа 6-7 класра вĕренекенсем çеç çӳреççĕ. Аслăраххисен çуранах çӳреме тивет. Шкулти шыв пăрăхĕсем те кивелсех çитнĕ. Çивитти юхать.

Кунти ача садĕнче ĕçлекенсене вара пĕчĕк шăпăрлансене вылямалли оборудованисемлĕ ача-пăча площадки çукки пăшăрхантарать. Картишĕнчи икĕ верандăн тăррипе урайне те юсаса хăшкăлнă кунта. Тепĕр проблема вара ĕç режимĕпе çыхăннă. Ача сачĕ 17 сехет çурăччен ĕçленипе хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ ывăл-хĕрĕсене урăх садиксене куçарнă. Ĕç хыççăн ĕлкĕрме çук, меллĕ мар. Çак сăлтав кунти ачасен йышĕ татах сахалланасси патне илсе ан пытăр тесен, ĕç вăхăтне тăсмалли пирки шутлани кирлех пулĕ.

Атапайĕнчи вĕрентӳпе культура центрĕнче вĕренекенсен йышĕ сахаллансах пыни те коллектива та, ял-йыша та сехĕрлентерет. Шкула сыхласа хăварасси кунта тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Çавăн пекех ашшĕ-амăшĕсене искусство шкулĕн филиалĕнче сехетсем сахалрах пулни шухăшлаттарать. Ачасем кунта тĕрлĕ инструментсемпе те калама вĕренеççĕ. Ачасен ташă тата çитĕннисен пултарулăх коллективĕсем валли костюм çĕлетме те пулăшусăр май çук тесе шутлаççĕ.

Ачасен йышĕ тенĕрен, ку проблема вара ку тăрăхра, чăннипех те, пур. Иртнĕ çул виçĕмçулхинчен 8 ача сахалтарах çуралнă: 25-ĕн. Вилекенсем вара 2 хут ытла пулнă çуралакансенчен.

Вырăнсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсенче ĕçлекенсем тин çуралнă ачасен сывлăхне тĕрĕслесех тăраççĕ. Мулкачкассинчи ФАПРра ĕçлекенсен вара лицензи илессипе çыхăннă ĕçсем пайтах-ха.

Ял тăрăхĕн кунне пĕтĕмлетме пуçтарăннă чух та, каçхине Орининти Культура çуртĕнче халăхпа иртнĕ тĕл пулура та ыйтусем пулчĕç. Вĕсем çине тулли хуравсем илчĕç. Паянах татса пама çук ыйтусене вара хăçан тата мĕнле татса пама май пуррине палăртрĕç. Ку тăрăхри художество пултарулăх коллективĕсем юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

Л. ТУКТИНА.

Алă сулнипе ыйту татăлмасть

Çатракасси ял тăрăхĕн кунĕнче К. Иванов ячĕллĕ хуçалăх фермисенче пулнă хыççăн кăмăл çĕкленмерĕ. Кунта ĕçлекенсен те вăл сӳрĕк.

-Апачĕ те çук. Ĕç укçи пĕчĕк, — пăшăрханса каласаççĕ сысна ферминче ĕçлекенсем. Хуçалăхри вăтам ĕç укçи 1097 тенкĕпе танлашать пулсан, кунта вăл 800 тенкĕ те пулнă. Çук апатпах ăçтан-ха тухăçлă продукци туса илĕн? Юнашарти "Свободăн" вăл пурăнмалли чи пĕчĕк минимумах çитеймест пулин те, вĕсеннинчен 2 хут ытларах. Ку хуçалăхăн правлени çуртĕнче тĕл пулса каласнă уй-хир ĕçченĕсен сăмахĕнчен вара Кашмашсемпе Çатракассисем хăйсен хуçалăхĕ хăйсене пĕрлештерсе тăнăшăн хĕпĕртени палăрать. Хуçалăх саланни унта ĕмĕр-ĕмĕр ĕçленисенех ĕçсĕр тăратса хăварнă районти тĕслĕхсем вĕсене тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тумалăх пур. Çапах та сăмахсем хушшинче те пулин ĕç укçине вăхăтрах илейменни палăрчĕ. Кашни уйăхрах аванс шучĕпе те пулин укçа пани вĕсене кăштах лăплантарать.

Ку тăрăхра килти хушма хуçалăха аталантарассипе тимлени вара çакăнтан та курăнать: "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма 76-ăн çăмăллатнă кредит илнĕ. Çав шутран ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăй те.

Икĕ хуçалăх ĕçченĕсен пĕр пек ыйтусем те вара пулмарĕç мар. Вĕсенчен пĕри - çĕнĕ урамсене электроçутă кĕртесси.

- Кашмашри çĕнĕ урамра 6 çул пурăнатăп, 6 çул çав проблемăпах, - пăшăрханса каласать хĕрарăм. Торинкассисемпе Çатракассисене те Çатракассинче клуб çукки тарăхтарать.

- Пирĕн ачасем Кашмаша кайиччен вĕсене Шетмĕпуçне çывăхрах. Унта вара ют ачасем килчĕç тесе вырăнтисем кӳрентерме пуçлаççĕ. Ак ăçтан пуçланать çамрăксем преступлени çулĕ çине тăрасси, - пăшăрханнине те, тарăхнине те пытармасть Çĕньял Хуракассинче пурăнакан ача амăшĕ. Çатракасси шкулĕнче вĕрентекенсемпе иртнĕ тĕл пулура та ку ыйту çак тăрăхра çивĕччи палăрчĕ. Ку тĕлĕшпе халăхпа пĕрле пуçтарăнса каласма кирлине палăртрĕç.

Шыв ыйтăвĕ вара икĕ хуçалăх çыннисемшĕн икĕ енлĕ тухса тăчĕ: Çĕньял Хуракассинче, хăйсем пек каласан, Быков урамĕнче шыв патне питĕ инçе. Кашмашсене вара çава шывлă вырăнта тăни канăç памасть:

- Çынсене шыва пăрахатпăр вĕт. Тепĕр чух алăкран та кĕме çук, карта урлă каçма тивет, - теççĕ вĕсем.

Ĕç коллективĕсенчи тĕл пулусенче те, каçхине халăхпа иртнĕ тĕл пулусенче те ыйтусем пулчĕç: çĕре харпăрлăха куçарассипе, ача пособине иессипе çыхăннă тата ытти ыйтусем. Кашмашсемпе Çатракассисене тата ял тăрăхĕн администрацийĕ инçе вырнаçни пăшăрхантарать.

Тепĕр палăрăм пирки каламасăр ниепле те иртес килмест. Ял тăрăхĕн кунĕнче çавăн пекех ку тăрăхра пурăнакансем ял тăрăхĕн ĕçне епле хакланине кăтартассипе хатĕрленĕ ыйтусем çине хуравлама ыйтсан, ферма ĕçченĕсенчен ытларахăшĕ эпир ним те пĕлместпĕр тесе алă сулма юратни палăрчĕ. Хăйсем иртнĕ суйлавра ял тăрăхĕн депутачĕсене камсене суйланине те астумаççĕ. Ку мĕн çинчен калать? Вырăнти обществăлла пурнăçпа интересленменни, маншăн ик айкки те тăвайкки, тени çинчен. 131-мĕш Федераллă саккун вара вырăнти лару-тăру хамăртанах килни çинчен калать. Ку тăрăхра пурăнакансен ял тăрăхĕн администрацийĕпе, вырăнти депутатсемпе пĕр тĕллевлĕн пулни çитсех каймании палăрать. Ку вара паян пĕтĕм ĕçĕн никĕсĕ пулса тăрать. Апла пулсан ку тĕлĕшпе икĕ енчен те пĕр-пĕрин патне тунă утăмсем кирлех.

Л. ПАВЛОВА.

Цифрăсен чĕлхипе

Лайăххине анлă çул парас пулать

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 13303 хуçалăх шутланать, çав шутран уйрăм гражданен харпăр хăй хуçалăхĕсем – 13218. 36,7 пин çын пурăнать. Вăл шутран 3189 çын – Муркаш ялĕнче.

2005 çулта 355 çын çуралнă, 675 çын вилнĕ пулсан, иртнĕ çул 366 çын çуралнă тата 664 çын вилнĕ.

Районĕпе 2006 çулта 830813,3 пин тенкĕлĕх тавар туса кăларнă тата ĕççемпе услугăсем пурнăçланă. Ку вăл, унченхи çулхипе танлаштарсан, 126,9 процент пулать. Ял хуçалăх предприятийĕсем продукци туса хатĕрлессине 17,2 процент, промышленность предприятийĕсем 34,6 процент ӳстернĕ. «Муркаш издательство çурчĕ» патшалăх унитарлă предприятийĕ, «Сеспель» чикĕллĕ яваплăхлă общество, Муркашри пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ, «Моргаушрайгаз» предприяти ку енĕпе уйрăмах ăнăçлă ĕçленĕ.

Район бюджечĕн хăйĕн тупăшĕсем 36077 пин тенкĕпе танлашаççĕ. Ку вăл унченхинчен 32,6 процент пысăкрах. Тӳлевлĕ пулăшусем 67546,3 пин тенкĕлĕх панă е унченхи çулхинчен 16,8 процент нумайрах. «Моргаушрайбыт» предприяти уйрăмах ăнăçлă ĕçленĕ, пулăшусем парассине 37,6 процент ӳстернĕ. Çав вăхăтрах «Нежность» предприяти пулăшусем парассине 5 хута яхăн чакарнă.

Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕ, 2005 çулхипе танлаштарсан, 115,3 процентпа танлашнă. Мăн Сĕнтĕр райповĕпе тавар çаврăнăш калăпăшĕ 22,9 процент, Муркаш райповĕпе 22,7 процент ӳснĕ.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем те япăх ĕçлемен. Хăйсен ĕç кăтартăвĕсене унченхинчен ӳстерме пултарнă.

Районĕпе чĕрĕ виçепе 7991 тонна аш-какай реализациленĕ е, 2005 çулхипе танлаштарсан, 125,8 процент. Обществăлла секторта ку кăтарту 114 процентпа, килти хушма хуçалăхсенче 133,5 процентпа танлашнă.

Пĕтĕмпе 47192,2 тонна сĕт туса илнĕ е 102,4 процент (обществăлла секторта 98,8 процент тата килти хушма хуçалăхсенче 103,8 процент). Кашни ĕне пуçне вăтам сăвăм 4011 килогрампа танлашнă.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 526 грамм (2005 çулта 519 грамм), сыснасем 431 грамм (345 грамм) ӳт хушнă. Пĕтĕмпе 27329 (27622) çура илнĕ.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 126,8 центнер (100,8 центнер) аш-какай, 749,1 центнер (731,7) сĕт туса илнĕ. Килти хушма хуçалăхсен кăтартăвĕсем ӳсĕмлĕрех.

Мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ унченхи çулхинчен чакнă, 21473 пуçран 19923 пуçа юлнă. Çав шутран ĕнесен йышĕ 94,2 процента юлнă. Сыснасен йышĕ вара ӳснĕ, 17877 пуçран 19775 пуçа çитнĕ.

Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 25,6 пин тонна (2005 çулта 30,3 пин тонна), çĕр улми 19 пин тонна (18,2 пин тонна) пухса кĕртнĕ. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен вăтам тухăçĕ гектар пуçне 16 центнерпа (унченхи çул 18,3), çĕр улми тухăçĕ 148,1 центнерпа (130,2) танлашнă.

205 çулта ял çыннисенчен 46613 тонна сĕт сутăн илнĕ пулсан, иртнĕ çул ку кăтарту 52289 тоннăпа танлашнă. Муркаш райповĕ ку енĕпе уйрăмах тухăçлă ĕçленĕ, кăтартăва унченхинчен 12,2 процент ӳстернĕ.

Уйрăм çынсенчен аш-какай Муркаш райповĕ 63 тонна, Мăн Сĕнтĕр райповĕ 89 тонна сутăн илнĕ. Районĕпе вара 1265 тонна аш-какай сутăн илсе 2005 çулхи кăтартăва 26,2 процент ӳстернĕ.

Пĕтĕмпе 353540,6 пин тенкĕлĕх инвестицисемпе усă курнă (127,2 процент). Çав шутран уйрăм çынсем усă курнисем 269000 пин тенкĕпе (148,2 процент) танлашаççĕ. Çулсем 10,4 километр (2005 çулта 5 километр), çав шутран çĕнĕрен 9,6 километр (5 километр) тунă.

Районта ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,4 процентпа танлашать. Ку вăл 2005 çулхинчен 0,12 процент пĕчĕкрех.

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.

Суд реформи: çыннăн тата гражданинăн интересĕсене хӳтĕлессишĕн

Суд мĕрĕс йышăну турĕ

Çын патшалăх е муниципаллă учрежденире сывлăх сиплев ĕçĕпе çыхăннă е ытти сывлăх сыхлавĕн ĕçĕнче ялта 25 çултан кая мар вăй хурать пулсан, РФ Пенси фончĕ ăна вăл миçе çула çитнине пăхмасăр çул çитмесĕрех ĕç пенсийĕ пама килĕшменни тĕрĕсех-и?

Паян эпир сире кун пек конкретлă тĕслĕх пирки каласа парасшăн. 2006 çулхи августăн 18-мĕшĕнче В. гражданка РФ Пенси фончĕн районти управленине нумай çул ĕçленĕшĕн пенси илсе тăма заявленипе пынă. Пенси фончĕн районти управленийĕнче ăна ялта ĕçлесе пурăннин стажĕ 25 çула çитмест тесе пенси пама килĕшмен. Управлени палăртнă тăрăх, çав вăхăт тĕлне унăн ялта ĕçлесе пурăннă стаж 24 çул та 8 уйăх та 20 кунпа танлашнă. Кунпа пĕрлех вăл ĕç укçине илмесĕр отпускра пулнă вăхăта, квалификацие ӳстернĕ тапхăра шута илмен.

В. гражданка Пенси фончĕн йышăнăвĕпе килĕшмесĕр район судне иск çырса пачĕ. Суд вара çак ĕçе пăхса тухса çакна палăртрĕ. «РФ ĕç пенсийĕсем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн çынсен çул çитмесĕрех пенсие тухас пулсан çынсен сывлăхне сыхлас тата сиплес ĕçре ялта 25, хулара пулсан 30 çултан кая мар ĕçлени кирлĕ. РФ Правительствин 2002 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнчи 781 № постановленийĕпе çул çитмесĕрех пенсие тухма май паракан должноçсемпе учрежденисен списокне палăртнă. Вăл çав çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕнĕ.

Çапла вара районти тĕп больница хушăвĕпе В. хăйĕн специальноçĕпе квалификацие ӳстермелли курссенче пулнă. РСФСР Министрсен Совечĕн 1991 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнчи 464 № йышăнăвĕпе çак тапхăра ĕç стажне кĕртессипе чару таврашĕ çук. Мĕншĕн тесен ĕçлекенсем квалификацие ӳстермелли курссенче пулнă тапхăрта ĕç хутшăнăвĕсем татăлмаççĕ, вĕсем командировкăра шутланаççĕ, вĕсене ĕç укçи тӳлеççĕ. Çавна май суд В. гражданкăн искне тивĕçтерчĕ, унăн ĕç стажĕ 25 çултан кая мар тата вăл пенси илсе тăма пултарать тесе йышăнчĕ, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн йышăнăвне пăрахăçларĕ. Çапла вара В. гражданка çул çитмесĕрех ватлăх енĕпе пенси илсе тăма пултарать.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Енчен те эсир ватлăхпа паракан ĕç пенсине вăхăт çитмесĕрех парассипе сирĕн гражданла правăсене пăсаççĕ тесе шутлатăр пулсан, хăвăрăн правăсене сыхлама яланах район судне пыма пултаратăр.

В. ЗАХАРОВ,
судьяна пулăшаканĕ.

Ялти ятлă çынсем

Пурнăç телейне ĕçре туптанă

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакан Мария Степановнапа Михаил Егорович Степановсене чылайăшĕ аван пĕлеççĕ. Иккĕшĕ те вĕсем – Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн Сĕнтĕрти филиалĕн ветеранĕсем, чылай вăхăт ку предприятире ырми-канми ĕçленĕ. Мария Степановна кунта пир-авăр тĕртекен пулса, Михаил Егорович вара мастерта тăрăшнă. Вăл ертсе пынипе пир-авăр тĕртмелли станоксем яланах юсавлă пулнă, йĕркеллĕ ĕçленĕ. Хастар ĕçпе Степановсем Хисеп грамотисене, парнесене сахал мар тивĕçнĕ.

1957 çулта вĕсем çемье çавăрнă. Çак кунсенче унтанпа шăпах 50 çул çитет. Ултă ача пăхса ӳстернĕ, пурне те тивĕçлĕ воспитани парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Пурте вĕсем ĕç тиркесе тăмаççĕ, ырă кăмăллă, ашшĕ-амăшне хисеплеççĕ.

Пурнăçра вĕсем пысăк мул пухайман. Апла пулин те пĕр-пĕрне хисеплесе шăкăлшăкăл пурăннинчен, ырă кăмăллă ача-пăча пăхса ӳстернинчен лайăхраххи нимĕн те çук тесе шутлаççĕ.

Ял çынни выльăх-чĕрлĕхсĕр епле-ха. Степановсем те килти хуçалăхра ĕнине те, сыснисене те, чăх-чĕпне те, хурĕсене те пăхса усраççĕ. Пахчара вара çĕр улми, пахча çимĕç, улма-çырла тухăçпа савăнтарать.

Ватă çынсенне вăрçă хыççăнхи йывăр вăхăт та сывлăхĕсене хавшатман мар ĕнтĕ. Çитменнине Михаил Егорович çитес çул 80 çул тултарать. Халĕ килте ват çынсене хĕрĕсенчен пĕри Оля пăхса пурăнать. Вăлах Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче музыкăна вĕрентет. Ытти ачисем те ашшĕпе амăшĕ патне тăван килне пырсах çӳреççĕ. Пурте вĕсем хăйсен ашшĕпе амăшне ылтăн туй ячĕпе саламласа малашне те ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунаççĕ.

В. ЕГОРОВ.

Контрактникам

Выбирайте военную службу

В целях укрепления южных рубежей Российской Федерации и создания воинских частей со специальной горной подготовкой в условиях Северного Кавказа, Правительством России принято решение о размещении на постоянной основе на территории Республики Дагестан (г. Ботлих) 33 отдельной мотострелковой бригады (горной) и на территории Карачаево-Черкесской Республики (станица Зеленчукская) 34 отдельной мотострелковой бригады (горной).

Указанные мотострелковые бригады формируются из числа военнослужащих, проходящих военную службу по контракту. Военнослужащие по контракту будут проживать в благоустроенных общежитиях с жилыми ячейками по 3 человека в комнате, где предусмотрены душевые, индивидуальные шкафы на каждого военнослужащего.

Ежемесячное денежное довольствие военнослужащего, проходящего военную службу по контракту, в отдельных мотострелковых бригадах (горных), к примеру:

1. Стрелок, воинское звание – рядовой: к выдаче на руки - 11 874,88 руб.

2. Командир отделения, воинское звание – сержант: к выдаче на руки – 12 966,07 руб.

Кроме ежемесячного довольствия предусмотрены материальная помощь, квартальные, годовые премии и другие выплаты.

Подробная информация об условиях прохождения военной службы в 33 и 34 мотострелковых бригадах в военном комиссариате Моргаушского района (тел.: 2– 13 - 84).

Зам. военного комиссара района
майор Д.Н. ЗАХАРОВ.